

# ТĂВАН РЕСПУБЛИКĂМ, ЧĂВАШ ҪĔРШЫВĔ!

Тăван республикăм, Чăваш ҫĕршывĕ! Ăҫта кайсан та эсĕ яланах чун-чĕрене ăшăтатăн. Сана аса илсессĕн, куҫăм умне манми килĕм, юратнă ялăм тухса тăрать. Пăла шывĕ шăнкăртатса юхнăн туйăнать. Хăватлă Атăл шухăш-кăмăлăма ҫĕклет.

Тăван республикăм, Чăваш ҫĕршывĕ! Сана пĕтĕм Ҫĕр-планета илтмелле «Эсĕ пирĕн аннемĕр!» теессĕм килет. Эсĕ пире чĕрҫӳ ҫинче сиктерсе ӳстертĕн, алла кĕнеке тыттартăн, пурнăҫ ҫулĕ ҫине тăратрăн. Пирĕн чун-чĕрере, шухăш-кăмăлра мĕн лайăххи, мĕн ырри — пурте сан ятупа ҫыхăннă.

Тăван республикăм, Чăваш ҫĕршывĕ! Сана Ленин аттемĕр мандат парса ҫула кăларнăранпа ҫур ĕмĕр ҫитрĕ. Аллă ҫул! Халĕ сан ҫине пăхатпăр та пĕтĕм чунтан савăнатпăр. Эсĕ пĕтĕм совет ҫĕршывĕпе пĕрле мăнаҫлăн малалла утатăн, ҫĕнĕ пурнăҫ керменне тăватăн.

Тăван республикăм, Чăваш ҫĕршывĕ! Сана аса илсессĕн, куҫ умне паттăр ывăл-хĕрӳ, ҫулăм чĕреллĕ ҫыннусем тухса тăраҫҫĕ. Эпир Василий Чапаевпа Иван Яковлев, Константин Ивановпа Ҫеҫпĕл Мишши, Петĕр Хусанкайпа Андриян Николаев, Сергей Коротковпа Василий Зайцев, Юлия Петровăпа Михаил Степанов тата ытти тăванăмăрсен ячĕсемпе мухтанатпăр. Тăван ҫĕршывшăн, халăх ырлăхĕшĕн чунне парса ĕҫлекенсен шучĕ куллен ӳссе пынишĕн савăнатпăр.

Тăван республикăм, Чăваш ҫĕршывĕ! Эсĕ ҫунат сарса, вăй-хăват илсе пыратăн, халăхсем хушшинчи туслăха ҫӳле ҫĕклетĕн. Тус-тăван тени пирĕн енче пысăк хисепре. Тăван вырăс халăхĕ, тăван Украина халăхĕ, тăван тутар халăхĕ... Совет ҫĕршывĕнчи пур халăхсем те пире ҫывăх!

Эпир Раҫҫейре, хăватлă ҫĕршыв хӳттинче пурăнатпăр. Вырăс халăх хуйхи-суйхи — пирĕн хуйхă-суйхă. Вырăс халăх савнăҫĕ — пирĕн савнăҫ. Пирте вырăссен пултарулăхĕ, ĕҫченлĕхĕ, ăсĕ-хĕлĕ тапса тăрать. Эпир ĕмĕртенпех вырăссемпе пĕрле пулнишĕн телейлĕ.

Тăван республикăм, Чăваш ҫĕршывĕ! Сан ҫинчен калас сăмахăм ҫав тери нумай. Кăҫал чаплă юбилей кĕрекинче иртнине те аса илессĕм килет. Октябрьччен, ҫĕр ҫине ҫĕнĕ самана киличчен, мул хуҫисем пиртен кулнă, мăшкăлланă. Вĕсем пире ҫаратнă, вилес патне ҫитернĕ.

Ҫапах та халăх ҫутă ĕмĕтне ҫухатман. Ҫĕр ҫине ырă пурнăҫ килессе, пире телей хĕвелĕ ҫутатасса шанса тăнă.

Тăван республикăм, Чăваш ҫĕршывĕ! Эсĕ мĕнле кăна йывăрлăхсем тӳсмерĕн-ши! Октябрь хĕвелне сӳнтерес тесе, тăшмансем мĕн-мĕн тумарĕҫ пулĕ! Элек хыҫҫăн элек, интервенци, Тăван ҫĕршывăн аслă вăрҫи... Ҫав йывăр кунсенче эсĕ те пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле ҫапăҫăва ҫĕклентĕн. «Е пурнăҫ, е вилĕм!» терĕмĕр эпир. Хаяр тăшмана ҫĕнтертĕмĕр, ҫапса салатрăмăр. Вăрҫăпа юхăннă хуҫалăха юсарăмăр, ура ҫине тăратрăмăр. Халь эсĕ тĕпрен ҫĕнелсе улшăннишĕн, ӳссе ҫĕкленнишĕн савăнатпăр, сан ҫинчен сăвă-юрă хыватпăр.

Тăван республикăм, Чăваш ҫĕршывĕ! Совет саманинче ҫунат сарнă хулусемпе ялусем ҫине пăхсассăн, чун савăнать, чĕрере ырă туйăм ҫуралать. Шупашкар хăйĕн фабрик-завочĕсемпе, комбиначĕсемпе тĕнче умне тухрĕ. Мĕн кăна ҫук-ши тата колхозлă ялсенче! Ҫыннисем мĕнлерех! Хастар. Паттăр. Вĕсем пурте ҫĕршыв чысĕпе мухтавĕшĕн таса кăмăлпа, мĕнпур вăй-халпа ĕҫлеҫҫĕ. Ырма та пĕлмеҫҫĕ пек.

Тăван республикăм, Чăваш ҫĕршывĕ! Ҫĕнĕ саманара эс хамăр сăвă-юрăн, чĕлхемĕрĕн хăватне тата ҫӳле ҫĕклерĕн. Хамăра пăхса ӳстернĕ атте-аннемĕр чĕлхипе халĕ хурҫă тататпăр, паттăр ĕҫсем тăватпăр, тĕнче уҫлăхĕнче вĕҫетпĕр.

Тăван республикăм, Чăваш ҫĕршывĕ! Хиседлĕ юбилейна эсĕ телейлĕ тапхăрта, Владимир Ильич Ленин ҫуралнăранпа шăпах пĕр ĕмĕр тултарнă ҫул, паллă тăватăн. Эпир, санăн ывăлусемпе хĕрӳсем, яланах ҫапла калатпăр: Октябрьпе Ленин пире асаплăхпа хĕн-хуртан хăтарчĕҫ, ҫĕнĕ ĕмĕр пиллерĕҫ. Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе эпир ҫĕнтерӳ хыҫҫăн ҫĕнтерӳ турăмăр, чăваш ҫĕршывĕн сăн-сăпатне те тĕпренех улăштарса ҫĕнетрĕмĕр.

Тăван республикăм, Чăваш ҫĕршывĕ! Эсĕ чăннипех те илемлĕ юрă пулса тăтăн.

**Василий ДАВЫДОВ-АНАТРИ,**
**Чăваш АССР культурин тава тивĕҫлĕ работникĕ.**

*Ӳкерчĕкре: Шупашкар хулинчи Гагарин урамĕ.*